(cc) BY



***Шашкова Ольга Валерьевна***

воспитатель

МБДОУ «Д/С №78 «Колосок»

г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ТЕХНОЛОГИИ РАЗВИТИЯ КРИТИЧЕСКОГО МЫШЛЕНИЯ ДЕТЕЙ

***Аннотация**: в современных образовательных учреждениях используются разные виды технологий, которые позволяют развивать коммуникативные качества, умение самостоятельно находить нужную информацию в большом потоке. В статье рассмотрены технологии и методы, которые способствуют развитию у детей критического мышления.*

***Ключевые слова**: критическое мышление, вызов, осмысление, рефлексия, мозговая атака, кластер, бортовой журнал, взаимообучение, фишбоун, даймонд, синквейн.*

Паянхи шкултан вĕренсе тухса каякан умне XXI ĕмĕрти общество тĕрлĕ ыйту лартать. Вĕсем хушшинче – хăй тĕллĕн кирлĕ информации (пĕлӳ) илме пĕлни; тĕрлĕ информацирен кирлине суйласа илме пĕлни; хăйĕн шухăшлавне аталантарма, тĕрлĕ сăлтава сӳтсе явма пĕлмелли; тĕрлĕ ӳсĕмри çынсемпе хутшăнма пĕлни, пурнăç таппипе тан утакан пулни [1].

Малаллахи пурнăçра вĕренекене ăнăçлă пулма вĕрентме учителĕн кăна мар, ĕç мелĕсен те улшăнмалла. Паянхи пĕлӳ параканăн çирĕпленнĕ йĕркерен (рольтен) тухса дирижер, режиссер, йĕркелекен (организатор) пулса тăмалла. Унăн ĕçĕ – вĕренӳ ĕçне ачасене анлă хутшăнтарни. Çакăнта ĕнтĕ вĕренекенсем пĕрпĕринпе хутшăнса калаçу йĕркелесе çĕнĕ информаципе паллашаççĕ.

Ачасен шухăшлавне аталантармалли технологисен тĕллевĕ – ачасен шухăшлавне аталантарасси, информаципе ĕçлеме вĕрентесси, кирлĕ пĕтĕмлетӳсем туса вĕсене тĕрлĕ енчен хак пама вĕрентесси.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ачасен шухăшлавне аталантармалли технологисем виçĕ ушкăна пайланаççĕ: чĕнӳ (вызов), темăна, проблема шухăшне ăнланни (осмысление), хак пани (рефлексия). Паянхи литература урокĕ çакăн пек пайсенчен тăрать [2].

*Чĕнӳ тапхăрĕ* тем тесен те кашни урокрах пулмалла. Ку тапхăрта ачасем вĕрентекенпе пĕрле панă темăпа е прблема тăрăх мĕн пĕлнине сӳтсе яваççĕ, учитель ачасене вĕренме хавхалантарать, пăхса тухмалли кирлĕ ыйтусене палăртаççĕ, вăлах ачасене килте тата шкулта ĕçлеме хистет.

Ку тапхăрта усă куракан мелсем шутĕнче:

– «*пуç мимине аталантарни*» (*мозговая атака*). Çак мел харпăр-хăй шухăшне пысăк аудитори умĕнче калама вăтанакан ачасене пулăшать. Ыттисем умĕнче хăй калас тенине уçса панă хыççăн вĕренекен урокри калаçусемпе тавлашусене хутшăнма ппултарать;

– *кластер*. Çак мелĕн тупсăмĕ – текстра çырса панă ăнлава, пулнă япалана, пулăма пĕтĕмлетсе хĕвел пек ӳкерсе çырса кăтартни. Хĕвел варрине тĕп ăнлав çырăнать.Çак сăмаха ăнлантаракан сăмахĕсем унăн пайăркисем пек çырăнаççĕ. Кластера ачасем курăмлă пулнишĕн кăмăлласçĕ. Кластер – панă термина ӳкерсе, унăн енĕсене кăтартса пани. Кластер – «çăлтăрсен ушкăнĕ, (çыхă)» тени пулать. Кластер çырмалли йĕрке ансат. Ку мел паянхи кун анлă сарăлнă;

– «*тĕрĕс тата йăнăш çирĕплетсе калани*» ачасене çĕнĕ материала хăвăртрах пăхса тухма хавхалантарать. Çак мелпе писателĕн пунăçĕпе пултарулăхне вĕрентнĕ чухне усă курма меллĕ. Учитель проблемăлла ыйтусем кăларса тăратать. Вĕсем кашниех «Ĕненетĕр-и эсир…» сăмахсемпе пуçланаççĕ. Вĕренекенсем текста вуласа хăшĕсем тĕрĕс, хăшĕсем терĕс мар пулнине палăртаççĕ.

*Темăна, проблема шухăшне ăнланни (осмысление)* тапхăр вĕренекене çĕнĕ информаципе паллашма, ăна ăнланса илме, кивĕ информаципе çĕннине танлаштарма, пĕрремĕш пайĕнче лартнă ыйтусен хуравĕсене тупма пулăшать.

Çак тапхăрта усă куракан мелсем:



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

– «*борт журналĕ*» (*бортовой журнал*) – хăйне евĕрле таблица. Вăл çĕнĕ тата кивĕ информации мĕнле çыхăннине кăтартать. Ачасен шухăшлавне аталантармалли ытти мелĕсем пекех тӳрех темиçе урок пайне йышăнма пултарать.

Çакăн пек таблица тултармалла:

| Панă темăпа мĕн пĕлетĕп | «+» тата «–» | Çĕнни мĕн пĕлтĕм |
|---|---|---|
| | | |

Пĕрремĕш юпине чĕнӳ тапхăрĕнче тултараççĕ. Иккĕмĕш тапхăрта тепĕр юпипе ĕçлеçĕ. Кунта вĕренекенсем çĕнĕ тата кивĕ информацие танлаштараççĕ. Текста вуласа пынă майăн вĕсем тĕрĕс е тĕрĕс мар пулнине палăртаççĕ. Виççĕмĕш юпипе текста пĕтĕмĕшле вуласа тухнă хыççăн ĕçлеме пуçлаççĕ. Кунта информаци тезис формипе çырăнать.

– «*ылмаш вĕрентӳ*» (*взаимообучение*). Психологсем каланă тăрăх, çĕнĕ информацие хăçан та хăçан хăв ăнлантаратăн ăна вĕренме çăмăлрах. Çак принцип çинче никĕсленет те ылмаш вĕрнетӳ.

Вĕренкенсем пĕр пек абзацсем çине пайланă текста илеççĕ. Малалла ачасем мăшăрпа е пĕчĕк ушкăнсемпе ĕçлеме пуçлаççĕ. Пĕр ушкăнри ачасем хăйсене панă текстăн пĕр пайне ыттисене ăнлантараççĕ. Ыттисем ыйту пама, тĕрĕслеме тата ăнлантарса пама сĕнме пултараççĕ. Çакăн хыççăн вĕренекенсем вырĕнĕсемпе ылмашаççĕ.

– *фишбоун* (*пулă шăмми*) – тепĕр курăмлă мелсенчен пĕри. Вăл вĕренекенсене сăлтавпа унăн йĕрĕ хушшинчи çыхăнăва курма, мĕн хыççăн мĕн пулса иртнине тата çĕнĕ информацие пĕтĕçтерме май парать. Фишбоун схеми пулă пуçĕнчен, аялтипе çӳлти шăммисенчен тата хӳринчен тăрать. Пуçĕнче татса памалли пĕр кăткăс ыйту, çӳлти шăммисем çинче – сăлтавĕ, аялтисем çинче – тĕслĕхпе чăн пулса иртнĕ ĕç, хӳриче вара – пĕтĕмлетӳ пулмалла;

– *синквейн* тесе сăвă формине калаççĕ, анчах та унăн рифми çук. Çак меле Америка поэчĕ Аделина Крепси шухăшласа кăларнă.Синквейн пилĕк пайран



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

тăрать, тĕрĕсрех каласан, пилĕк йĕркерен. Кашни пилĕк йĕркин хăйĕн функцийĕ.

Синквейн икĕ тĕрлĕ пулать: çирĕплетнĕ (классический) тата вĕрентӳллĕ (дидактический). Уроксенче ытларах иккĕмĕш тĕсĕпе усă кураççĕ.

Çирĕплетнĕ (классический) синквейнра йĕркесен шутне кăна мар, сыпăксен шутне те çирĕп тытса пымалла. Синквейнăн 22 сыпăкне çакăн пек схемăпа пайламалла: 2–4-6–8-2. Çакна пăхăнса поэтсем унăн тĕрлĕ варианчĕсене йĕркеленĕ: кутăнла синквейн, тĕкĕрлĕ синквейн, синквейн-лĕпĕш, «пуç кăшăлĕ» синквейн тата синквейн гирлянди.

Вĕрентӳллĕ синквейнра тĕп вырăнта унăн форми мар, содержанийĕ. Çавăнпа та сыпăксен тата сăмахсен шучĕн килĕшĕвĕ пулмасан та пултарать. Тĕпрен илсен, пилĕк йĕркери пулăмăн тема паллисем вырнаçмалла. Литература урокĕсенче синквейнпа хайлава пĕтĕмлетсе унăн тĕп шухăшне кĕскен каласа е çырса хăварнă чухне сăмахсен йышне ӳстерме тата ачасен шухăшĕсене уçса пама усă кураççĕ. Çакна туса çитерме синквейнăн ирĕклĕ йĕркипе усă кураççĕ. Вăл сăмахсен шучĕпе выляма, япала ячĕсене местоименисемпе, паллă ячĕсене причастисемпе улăштарма май парать.

Тĕпрен илсен синквейн çырмалли йĕрке çакăн пек пулать:

1. Пĕрремĕш йĕрке – синквейн ячĕ пулать (пĕр сăмахпа). Вăл тĕрлĕрен япала, обьект, е пулăм пулма пултарать.

2. Иккĕмĕш йĕркере (икĕ сăмахпа) пĕрремĕш йĕркери япалан паллисем пулаççĕ. Вĕсене çырнă чухне ытларах паллă ячĕпе е причастипе усă кураççĕ.

3. Виççĕмĕш йĕрке – пĕрремĕш йĕркери япалан ĕçĕ çинчен çырмалла. Çакна çырма виçĕ ĕç-хĕл е виçĕ деепричасти илеççĕ. Кирлĕ чухне ытларах та çырма юрать.

4. Тăваттăмĕш йĕркере – синквейн çыраканĕ хăйĕн шухăшне палăртать, авторăнне мар. Ку пайĕ синквейн çырнă чухне чи йывăрри, мĕншĕн тесен çак шухăша 4 сăмахпа çырса хăвармалла.



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

5. Пиллĕкĕмĕш йĕркере каллех пĕр сăмах çырмалла. Çак сăмах малтанхи йĕркесенчи шухăша пĕтĕмлетсе хăварать.

Çакăн пек пулмалла та ĕнтĕ урокра усă куракан тĕрĕс синквейн. Синквейна пĕрремĕш хутран никамах та тĕрĕс çыраймасть, çавăнпа та хăш-пĕр чухне учительсем ачасене тĕп сăмахран пăрăнма ирĕк параççĕ.

Анне

Хаклă, ырă, кăмăллă

Юратать, ӳстерет, тăрăшать

Хаклă та ырă кăмăллă анне пире юратса ӳстерет

Тăван

Синквейн çырни вĕренекенсен çак енĕсене аталантарать:

1) ачасен шухăшлавне аталантарать;

2) сăмахсен йышне ӳстерет;

3) хайлаври йывăр лару-тăрăва тишкерӳ тума вĕренет;

4) нумай шухăшсем хушшинче кирлине суйласа илме пулăшать;

5) ачасене хăйсен шухăшĕсене палăртма тата пĕтĕмлетӳ тума вĕрентет;

6) учительсене ачасен сăмах шайне тата вĕсен пĕлĕвне хак пама май туса парать.

– *даймонд* – çичĕ йĕркерен тăракан сăвă виçи, пĕрремĕшпе юлашки йĕрке пĕрне-пĕри хирĕçле ăнлавсем. Ку мелпе çырмалли йĕрке:

1 йĕрке: тема (1 япала ячĕ);

2 йĕрке: темăпа çыхăннă икĕ паллă ячĕ;

3 йĕрке: пĕрремĕш йĕркери темăпа çыхăннă виçĕ ĕç-хĕл;

4 йĕрке: 4 япала ячĕ: иккĕшĕ пĕрремĕш йĕркери темăпа, юлашки 2 япала ячĕ çиччĕмĕш йĕркери темăпа çыхăннă;

5 йĕрке: çиччĕмĕш йĕркери темăпа çыхăннă виçĕ ĕç-хĕл;

6 йĕрке: темăпа çыхăннă икĕ паллă ячĕ;

7 йĕрке: тема.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Тĕслĕхрен, А. Артемьев çырнă «Симĕс ылтăн» хайлава илер.

Валентин

Паттăр, хăюллă

Ĕçлеть, çапăçать, тавăрать

Валентин – чăн-чăн паттăр, Варсун – суеçĕ, сутăнчăк

Улталать, суять, мухтанать

Хăравçă, кахал

Варсун

– *икĕ енлĕ дневник*. Илемлĕ хайлава вуласа пынă майăн икĕ юпаллă таблица тултармалла. Пĕрремĕш юпине хайлври ăнланман сăмахсене, хăвăра килĕшмен, е килĕшнĕ сăмах майлашăвĕсене çырмалла. Иккĕмĕш юпинче çак сăмахсемпе сăмах малашăвĕсене мĕншĕн суйласа илнине, вĕсем сире мĕнле шухăшсем патне илсе çитернине çырмалла.

| Пĕр-пĕр ыйту | Ăнлантарса çрни |
|---|---|

*Виççĕмĕш тапхăрĕ – рефлексия*. Ку тапхăр мĕн пур информацие вĕренекенсене ăнланса илсе пĕтĕмлетме, кашни ачана хăй вĕреннĕ материала кирлĕ шайра йышăнма пулăшать. Çак ĕçе пĕчченшерĕн, мăшăрпа е ушкăнпа тума пулать.

Вĕреннĕ материала пĕтĕмлетме çăкăн пек мелсемпе усă курма пулать: кластер, эссе, синквейн. Çак мелсем шкул ачисене вĕреннĕ материала пĕтĕмлетме, шухăшлавне çивĕчлетме, анлăрах шухăшлама вĕрентеççĕ.

Вĕренекенсен шухăшлавне аталантармалли технологисемпе усă курни ачасенче чăтăмлăха, ыттисене итлеме вĕренессине, информаципе тĕрĕс усă курассине çиеле кăларма пулăшать.

Çапла майпа, ачасен критикăлла шухăшлавне аталантарас тĕллевпе вĕрентекен маларах асăннă тĕрлĕ технологисемпе усă курма пултарать. Çĕнĕлле вĕрентни çитĕнекен ăрăвăн тавра курăмне, шухăшлавне, ăнланаслăхне, пĕр-пĕр проблема тавра тĕрлĕрен шухăшлама, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме май параççĕ.



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***Список литературы***

1. Антонова З.С. Чăваш сăмахлăхĕн вĕренӳ меслетлĕхĕсем, чăваш шкулĕн 5–11-мĕш класĕсенче вĕрентекенсем валли / З.С. Антонова, В.П. Станьял. – Шупашкар: Чăв. кĕн. изд-ви, 2006. – 399 с.

2. Степанова Н.И. Современные технологии обучения чувашской литературе. – Чебоксары: ЧГПУ, 2013. – 144 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)